26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 8 ШАМАТКУН 6(6561) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ÇĔНĔ ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ САЛАМЛАНĂШĂН ТАВ ТУНИ

Совет Союзĕнчи тата ют çĕршывсенчи мĕнпур организацисемпе учрежденисене тата уйрăм çынсене, мана çĕнĕ çул çитнĕ май саламласа ырă суннăскерсене, тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Плана çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕнченех пурнăçласа пырар!

Иртнĕ 1943 çулта республикăри предприятисемпе учрежденисем фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç. 1942 çултипе танлаштарсан ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерчĕç.

Республикăри промышленность предприятийĕсем 1943 çулта пĕтĕмпе илсен, çулталăк планне ирттерсе тултарчĕç. Союзлă промышленноçĕн предприятийĕсем чи лайăх результатсем кăтартрĕç. Район промышленноçĕ те çулталăкри плана чылай иртгерсе тултарчĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ çичĕ уйăх ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Улатăрти паровозсем юсакан завод, Шупашкарти табак фабрики, Вăрмарти спортинвентарь фабрики тата ыттисем те çулталăкри плана срокчен пурнăçларĕç. 1942 çулта кая юлса пынă Çĕмĕрлери «Большевик» завод республикăри малта пыракан предприятисен ретне тăчĕ. Çакă пысăк çитĕнÿсем рабочисемпе работниксем пĕтĕм вăй-халпа тăрăшса ĕçленин чаплă результачĕсем пулса тăраççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри ватă слесарь Николай Офицеров юлташ çулталăк хушшинче 5 çулхи задание пурнăçларĕ. Коммунистсем хăйсен примĕрĕпе стахановла ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ. Сăмахран, Маковская юлташ задание уйăхран уйăхах 300—400 процент, Мореплавцева, Димитренко юлташсем 300 процент ытла тултарса пыраççĕ. Кун пек примерсем сахал мар. Заводри парти организацийĕ комсомол организацине пысăк пулăшу парать. Çакна пула комсомол организацийĕ çамрăксене вĕрентсе пырас тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕ. Комсомолецсен фронтовой бригадисене организациленĕ, вĕсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Шупашкарти табак фабрикĕнче ĕçлекенсем Александрова, Маркина, Герасимчук юлташсем кашни уйăхрах задание 200—250 процент тултарса ĕçлерĕç. Канашри вагонсем юсакан заводри Смагин, Мирошниченко стахановецсем те ĕç нормине тăтăшах 200-шер процент тултарса пыраççĕ.

Анчах республикăра юлса пыракан предприятисем, промартельсем пур-ха. Милютинкăри мехлеспункт çулталăкри плана тултараймарĕ. Наркомлес, наркомхоз, вырăнти топливо промышленность управленийĕ те 1943 çулта çителĕксĕр ĕçлерĕç. Асăннă отрасельсем начар ĕçлени унти руководительсем çаврăнăçусăр пулнинчен, рабочисемпе служащисене йывăрлăхсемпе кĕрешмешкĕн тата çĕнтермешкĕн мобилизацилеме пĕлменнинчен, çирĕп дисциплина пулманнинчен кăна килнĕ. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма чăннипех вĕренсе çитеймен-ха. Большевиксем нимĕнле йывăрлăхран та хăраса тăмаççĕ. Сталин юлташ çапла каланă: «Йывăрлăхсем пулĕç. Анчах эпир вĕсенчен хăрамастпăр, мĕншĕн тесен эпир—революци вут çулăмĕнче пиçĕхнĕ большевиксем. Йывăрлăхсем пулĕç, анчах эпир вĕсене, халиччен çĕнтерсе пынă пекех, çĕнтерĕпĕр, мĕншĕн тесен эпир—Ленинăн хурçă пек çирĕп партийĕ йывăрлăхсемпе кĕрешме тата çĕнтерме,—пăйкăшма тата йĕрме мар,—туптаса хатĕрленĕ большевиксем пулса тăратпăр».

Йывăрлăхсене çĕнтерес тесен, партипе хуçалăх руководителĕн пуçарулă пулмалла, большевикла тимлĕхпе çине тăрса ĕçлемелле, хамăр умра тăракан задачăсене татса пама пĕлмелле.

Çĕнĕ 1944 çул социализмла промышленноçăн çĕнĕ çитĕнÿсем тумалли çул пулса тăтăр. Социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ вăй-хăвачĕ пултăр. Çĕнĕ çулта çĕнĕ плансемпе обязательствăсем пулмалла. Пирĕн партипе правительство промышленноçа пур условисене те тип-тикĕс ĕçлесе пыма хушать.

Календарь 1944 çулăн январĕн 8-мĕшне кăтартать. Çĕнĕ çулти плана ăнăçлăн пурнăçлас кĕрешĕвĕн кунĕсем пуçланчĕç. Çак çулăн малтанхи кунĕнченех плана кашни уйăхрах ăнăçлăн пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе кашни предприяти руководителĕн партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене асра тытмалла.

Партипе хуçалăх работникĕсен иртнĕ çулта тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармалла мар. Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕнченех уйăхри задание срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Ĕç тухăçлăхне куллен-кун ÿстерсе пырассишĕн ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла.

Халĕ, вăрçă кунĕсенче перекетлĕх режимĕшĕн кĕрешесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пурне те перекетлессишĕн кĕрешесси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăма тивĕçлĕ. Çакна кашни работникăн çирĕп пăхăнса тăмалла.

Промышленность продукцийĕ туса кăларассине ÿстермелли пĕрремĕш услови вăл—поточнăй производство организацилесси пулса тăрать. Производствăн поточнăй меслетне кирек мĕнле предприяти те йĕркелеме пултарать. Производствăн поточнăй меслечĕпе ĕçлесси çине куçни производство циклне кĕскетме, производствăпа технологи процесне лайăхлатма, ĕçе тикĕслетме, продукци пахалăхне лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Ку тĕлĕшпе Канашри вагонсем юсакан заводра тата Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра чылай утăмсем тунă. Çак пахаран та паха меслете пур предприятисен те анлăн сарса ямалла.

Вăрçă вăхăтĕнче предприятисенче ĕçлеме çĕнĕ рабочисем нумай кĕчĕç. Вĕсене чи кĕске срoксенче ăсталăха вĕренсе çитме пулăшмалла, производство дисциплинине тата йĕркелĕхе хăнăхтармалла. Хăшпĕр предприятисенче çак ĕç çине чылай тимлĕн çаврăнса пăхрĕç. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра, сăмахран, вăрçă вăхăтĕнче квалификациллĕ кадрсене нумай йышлăн вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕрентсе хатĕрленĕ рабочисенчен çурри ытла—хĕрарăмсем. Вĕрентес ĕçе кунта техминимум курсĕсем урлă, стахановла шкулсем урлă туса пыраççĕ. Çамрăк рабочисене нумайĕшне опытлă производственниксем хăйсем çумне çирĕплетсе вĕрентсе пыраççĕ. Кунта кăçхи техминимум кружокĕ уçнă, вăл предприяти валли квалификациллĕ кадрсем хатĕрлет.

Тÿрех каламалла, кадрсене вĕрентсе политикăллă воспитани парас ĕçре пирĕн халĕ пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Кадрсем хатĕрлес ĕçе, сăмахран, Канашри пир-авăр фабрикинче лачах çителĕксĕр организациленĕ. Çав вăхăтрах кунта массăллă профессисем енĕпе çĕнĕрен 200 рабочи яхăн кирлĕ.

Çĕнĕ кадрсемпе ĕçлессине кирлĕ пек йĕркелени—вăл предприятисен ĕçне лайăхлатассине, продукцин хисепĕпе пахалăхне ÿстерессине пĕлтерет.

Социализмлă промышленность работникĕсем! Государство планне кашни уйăхрах ăнăçлăн пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешĕр! Геройла Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине хăвăр ĕçре татах та пысăк çитĕнÿсем тунипе ответлĕр.

Тăван çĕршывпа фронт панă заданисене тата та ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн мĕнпур вăйсене мобилизацилер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 6-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хуличчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем наступлени туса пынă, Житомир облаçĕнчи район центрĕсене—ЧУДНОВ хулипе ГОРОДНИЦА ялне, Ровно облаçĕнчи РОКИТНО ятлă район центрĕпе чугун çул станцине, Киев облаçĕнчи ЖАШКОВ тата УЗИН ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăнса илнĕ, çав шутра—НОВЫЙ МИРОПОЛЬ, СТАРЫЙ МИРОПОЛЬ, ПЕЧАНОВКА, ГОРОДИЕВКА, РОМАНОВКА, БОЛЬШИЕ КОРОВИНЦЫ, ГОЛОДЬКИ, ЗОЗОВ, РОСОШЕ, МЕДОВКА, ВЕЛИКАЯ РОСТОВКА, САЛОГУБОВКА, ЖУРАВЛИХА, ЮШКОВ РОГ, САЛИХА, СИНЯВА, ОСТРОВ, ЖИНЕГОРЫ, САВИНЦЫ, РОЗАЛЕЕВКА, МИРОВКА ятлă пысăк ялсене тата МИРОПОЛЬ, ПЕЧАНОВКА, РАЗИНО, МИХАЙЛЕНКИ, ЛИПОВЕЦ, ТОМИЛОВКА, СУХОЛЕСЫ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минсметсенчен персе тăнă.

Январĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 110 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен çурçĕртерехре тăшман хăйĕн резервĕсене илсе пынă та вăйлăн хирĕç тăрать. Пĕр соединени чаçĕсем кун каçиччен нимĕçсен икĕ контратакине сирсе янă, çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем çĕрле тăшмана атакăланă, алă вĕççĕн çапăçса, меллĕ позицисем тытса илнĕ. Нимĕçсенчен 5 тупă, 10 миномет, 26 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, хушăри оборона рубежĕнче тĕреклене ларма хăтланнă тăшманăн пехотине аркатса тăкнă та, татăклăн пырса çапса, Житомир облаçĕнчи район центрĕ тата шоссе çулĕсен питĕ кирлĕ узелĕ пулса тăракан Чудов хулине тытса илнĕ. Пĕр йĕркесĕр каялла чакса, гитлеровецсем хĕçпăшалсемпе çар материалĕсем нумай пăрахса хăварнă. Пирĕн çарсем тата Ровно облаçĕнчи Рокитно ятлă район центрне, Житомир облаçĕнчи Городница ятлă район центрне, Киев облаçĕнчи Жашков тата Узин ятлă район центрĕсене, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла тытса илнĕ. Малалла куçса пырса, совет чаçĕсем тăшмана пысăк çухату кÿреççĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне ытла, 83 танк, 68 хир туппи, хăй тĕллĕн çÿрекен 13 тупă, 200 миномет ытла, 175 автомашина тата 180 лав пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче—16 бронемашина, 63 тупă, 120 пулемет, 1.000 автоматпа винтовка ытла, 70 автомашина тата хĕçпăшал, боеприпассем, тĕрлĕ çар пурлăхĕ усракан 8 склада тытса илнĕ Чылай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Пропойск хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн йĕлтĕрçĕсен батальонĕ, тăшман тылне систермесĕр кĕрсе кайса, Днепр шывĕ урлă каçнă. Совет йĕлтĕрçисем нимĕçсен пехотнăй дивизийĕн штабĕ тăракан яла кĕтмен çĕртен пырса кĕнĕ. Хăюллăн атакăласа, пирĕн боецсем хурала тата штабри нумай офицера вĕлерсе пĕтернĕ. Штаба аркатса тăкса, йĕлтĕрçĕсем темиçе çынна, çав шутра нимĕçсен темиçе офицерне, тыткăна илсе, хăйсен чаçне ăнăçлăн таврăннă.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн десант антармалли хăвăрт çÿрекен пĕр баржине путарнă, 6 баржине хытă сиенленĕ.

Полесье облаçĕнчи районсенчен пĕринче çапăçакан партизансен отрячĕ чугун çул участокне минăсем хурса тухнă. Çав минăсем çине нимĕçсен çар эшелонĕ пырса кĕнĕ. Взрыв пулнипе рельс çинчен паровоз сирпĕнсе кайнă тата 14 автомашина тиенĕ 9 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Унсăр пуçне, совет патриочĕсем нимĕçсен фронта каякан маршевăй подразделенийĕсене темиçе хут та ăнăçлă пырса тапăннă. Гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем винтовкăсемпе пулеметсенчен персе, тăшманăн икĕ моторлă бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 78-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 14-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Гейниц Байке çапла каласа панă: «1943 çулхи август уйăхĕччен эпĕ Ганноверти тĕрлĕ предприятисенче тимĕр-тăмăртан япаласем тунă çĕрте ĕçлеттĕмччĕ, çав вăхăтра эпĕ Германие ирĕксĕр хăваласа килнĕ вырăссемпе тĕл пулаттăм. Вĕсене кунне 14 сехет ĕçлеттереççĕ. Пурăнасса вĕсем йĕри-тавра икĕ рет йĕплĕ пралук карса тухнă бараксенче пурăнаççĕ. Ĕçе кайнă чухне те, ĕçрен килнĕ чухне те вĕсене хураллаcа пыраççĕ. Германире ĕçлекен вырăс рабочийĕ кунне пĕр пĕчĕк татăк çăкăр (тĕрлĕ япала хутăштарса пĕçернĕскере) тата ыльăх кăшманĕнчен пĕçернĕ шĕрпе турилкке яшка илет. Выçă пурăннипе тата вăй çитми ĕçлеттернипе пула рабочисем ура çинче аран-аран тăраççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ вилсе пĕтеççĕ. Хăйсене панă ĕç нормине тултараймасан, вырăссене калама çук хытă хĕнеççĕ е концентрациллĕ штрафной лагерьсене яраççĕ. Çав лагерьсем çинчен аса илни кăна та çынсене çÿçентерсе ярать. Çав лагере яни вилĕмпе пĕрех пулнине пурте лайăх пĕлсе тăраççĕ. Унтан каялла чĕррĕн таврăнма çук».

Нимĕçсен 126-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 426-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вильгельм Хоппе çапла каласа панă: «Эпĕ Гавельбургра Мюллер заводĕнче ĕçлерĕм. Иртнĕ çула çав завода Курск облаçĕнчен, Крымран тата Украинăран вырăс хĕрĕсене 200 çын хăваласа пычĕç. Вĕсем хушшинче медицина институтĕнче вĕренекен студентсем, учительницăсем, хресчен хĕрарăмĕсем пурччĕ. Германири вырăс çыннисен пурнăçĕ тÿсмелле мар йывăр, ăна сывлăх енчен çав тери тĕреклĕ çын та нумай вăхăт хушши тÿсме пултараймасть. Нумай хĕрсем вĕсем валли тунă режима уççăнах хирĕçетчĕç. Вĕсен ирĕкне вылăх та, хĕнени те, мăшкăллани те хуçаймасчĕ. Вĕсем: «Пире пурпĕр Хĕрлĕ Çар килсе тыткăнран хăтаратех», тетчĕç».

Мирлĕ совет çыннисене Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайни гитлерла пуçлăхсем тăвакан тискер ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вăрçă вăрмалли законсене ирсĕррĕн пăсса, совет гражданĕсене хăйсен çуралнă çĕршывĕнчен, хăйсен çемьисенчен, ашшĕ-амăшĕсене хăйсен ачисенчен уйăраççĕ. Нимĕçсем ирĕк те мирлĕ совет гражданĕсене «тыткăна лекнĕ çынсем» е хăйсен чурисем туса хурса, вĕсене вырăпа асаплантараççĕ, вĕсен мĕн пур вăй-халне ĕмсе илеççĕ. Каторгăлла режима пула, выçăпа тата вăй çитми ĕçлеттернипе совет гражданĕсем пиншерĕн вилеççĕ. Фашистла тискер кайăксен çакăн пек хăрушă ĕçĕсем умĕнче ку таранччен тĕнче илтмен тискер преступленисем те нимĕнех те мар. Хĕрлĕ Çар тата мĕнпур совет халăхĕ ирсĕр тăшмана хаяррăн тавăрасшăн çунать, гитлерла палачсем вĕлерсе пĕтернĕ совет çыннисемшĕн хаяррăн тавăрасшăн çунса тăрăççĕ. Нимĕçсен фашистла чура хуçисем кашни асаплантарса вĕлернĕ совет гражданинĕшĕн, совет çыннисем тÿснĕ пур асапсемшĕн, Германие каторгăна хăваласа кайнă кашни çыншăн ответ тытĕç.

Украинăн наука академийĕн президентне Александр Александрович Богомолец академика, наука тĕлĕшпе питĕ паха ĕçсем тунăшăн, сурансене тата хуçăлнă шăмăсене сыватмалли питĕ лайăх препаратсем тунăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи январĕн 4-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Ленин орденĕпе тата «Серп и Молот» медальпе наградăласа, Социализмлă Ĕç Геройĕн званине панă.

Ÿкерчĕк çинче: Социализмлă Ĕç Геройĕ академик А. А. Богомолец.

Çĕнĕ гимнăн текстĕпе нотисене массăллăн пичетлесе кăларни

«Искусство» ятлă издательство Совет Союзĕн çĕнĕ гимне илемлетнĕ листовкăпа пĕр миллион экземпляр тата сĕтел çине хумалли пысăк плакат туса 100 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. Гимнăн текстне илемлĕ открыткăсем çине çапса, темиçе миллион экземпляр пичетлесе кăларма хатĕрлеççĕ.

Государствăн музыка издательстви çак кунсенче гимнăн нотисене массăллăн юрлама тата хутăш хорпа арçын хорĕ валли фортепиано пулăшнипе юрлама пичетлесе кăларать.

Государствăн çĕнĕ гимне музыка инструменчĕсемпе пулăшса пымасăр юрлама шкулсем валли пичетлесе кăлараççĕ. Çавăн пекех шкулсенче гимна ушкăнпа юрлама вĕренмелли плакатсем пичетлесе кăлараççĕ. (ТАСС)

Юсаса çитерĕнĕ шахтăсем ĕçлеме пуçланă

«Сталиноуголь» (Донбасс) горнякĕсем палăртнă вăхăтран икĕ уйăх малтан 14 пысăк шахтăна юсаса пĕтернĕ. Юсаса çитернĕ шахтăсене йышăнакан комисси вĕсене лайăх юсанине палăртнă. Çакă вăл Донбасс горнякĕсем Тăван çĕршыва панă çĕнĕ парне пулса тăрать. (ТАСС).

Çыхăну ĕçĕнче ĕçлекенсен ăмăртăвĕ

КАНАШ. Почтăпа çыхăну конторинче ĕçлекенсем М. И. Калинин юлташăн çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне тулли кăмăлпа сÿтсе-яврĕç. Вĕсем çĕнĕ çулта пур ĕçе те кăтартуллăн туса пыма пулса, татăклă обязательствăсем илчĕç. Огурцовăпа Львова телефонисткăсем пур телефонисткăсене те хăйсем пек ĕçлеме чĕнчĕç. Огурцов юлташ çыхăну ĕçĕнче лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулнă. Гавриловпа Петрова юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ. Хулари письмоносец Зоя Гурьева, вăхăта шута илмесĕр ĕçлесе, хăйĕн ĕçне яланах йĕркеллĕн туса пырать.

— Пирĕн ĕç вăрçă вăхăтĕнче мĕн тери кирлĕ ĕç пулса тăни паллă. Çыхăну ĕçĕ лайăх пулсан, пур ĕç те ăнăçлăн пулса пырать,—тет çыхăну конторин начальникĕ Некрасов юлташ.

Комсомолецсем малти ретре

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхозра ВЛКСМ организацин секретарĕ Семенов юлташ пуçарнипе вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе воскресник пулса иртрĕ. Çав кун комсомолецсем уя 215 лав тислĕк кăларнă, 70 центнер кĕл, 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Çавăн пекех ытти колхозсенче те комсомолецсем çуракине хатĕрленес енĕпе кăтартуллăн ĕçлеççĕ. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем (ВЛКСМ организацин секретарĕ Воробьев юлташ) уя 5.000 лав тислĕк кăларнă, 50 центнер кĕл пухнă.

Б. ШОРНИКОВ.

Тракторсене хăвăртрах юсаса пĕтерер

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). МТС-ра тракторсемпе машинăсене юсанă çĕрте ĕçлекенсем Горький облаçĕнчи Каменка МТС коллективĕн чĕнĕвне сÿтсе-явнă хыççăн татăклă обязательствăсем илнĕ. Вĕсем тракторсене Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле, молотилкăсемпе тырă вырмалли машинăсене июнĕн пĕрремĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак ăмăртура Васильевпа Аполосов юлташсен трактор бригадисем малта пыраççĕ, вĕсем хăйсен бригадисенчи тракторсене юсаса пĕтернĕ те ĕнтĕ.

Илнĕ обязательствăсене хăвăртрах пурнăçлас тесе, халь МТС коллективĕнче социализмлă ăмăртуна анлăн сарăлса пырать.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Ăмăртура мала тухассишĕн

Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшаççĕ. Иртнĕ çул эпир государство умĕнчи 1943 çулхи обязательствăсене парса татнă хыççăн 1944 çулшăн та 2400 пăт тырă тата аш-какай парса татрăмăр. Государствăна коопераци урлă пирĕн колхоз тата унăн членĕсем 8730 пăт тырă сутрĕç. Эпĕ хам та 50 пăт сутрăм.

Халĕ эпир çуракине хатĕрленетпĕр. Пирĕн колхозра 7 бригада, вĕсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра 2-мĕшпе 5-мĕш бригадăсем малта пыраççĕ, 2-мĕш бригадăна Отечественнăй вăрçă инваличĕ Г. Антонов юлташ ертсе пырать. Вăл вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа пĕтернĕ, плугсене, сеялкăсене тата сÿресене юсанă. 5-мĕш бригада та (бригадирĕ Фомин юлташ) Антонов юлташăн бригадинчен юлмасть. Çуракине хатĕрленес ĕçре 1-мĕшпе 7-мĕш бригадăсем юлса пыраççĕ.

Колхозăн вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене çак кунсенчех сортласа пĕтеретпĕр. Уя 2500 лав тислĕк кăларнă. Плугсене тата ытти машинăсене юсаса хунă.

Анчах çуракине хатĕрленес ĕçре пирĕн çитменлĕхсем пур-ха. Эпир çак куна çитсе те юр тытма тытăнман, колхозниксемпе колхозницăсене агротехникăна вĕренес ĕçе явăçтарман. Тÿррипех калас пулать, пирĕн колхозра агитацие ăнлантару ĕçĕ çителĕклĕ пымасть, стена хаçачĕсем тухмаççĕ. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ М. Ильин юлташ çителĕклĕ ĕçлемест. Çак çитменлĕхсене эпир халех пĕтерме тăрăшатпăр, пĕтеретпĕр те.

Пысăк тухăçла тырпул туса илес тĕлĕшпе эпир Чкалов ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлетпĕр. Ăмăртура пирĕн колхоз мала тухĕ, тесе шансах тăратăп.

Я. ИВАНОВ.
Канаш районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Çуракине хатĕр

ВĂРНАР. Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 1944 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн иртнĕ кĕр кунннех тимлĕн кĕрешме тытăнчĕ. Колхоз çĕнĕ çула çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илчĕ. Вăрлăхсене сортласа кондицине лартнă, вĕсене амбарсене уйрăммăн хунă. Ял хуçалăх машинисемпе лаша кÿлмелли хатĕрсене те пĕтĕмпех юсанă. Вĕсем çителĕклĕ ĕнтĕ. Халĕ колхозра бригадăсем валли çураки вăхăтĕнчи ĕç планне тăваççĕ, агротехникăна вĕренеççĕ. Колхоза икĕ агрокружок организациленĕ. Вĕсене парторганизаци секретарĕ Шлыковпа колхоз агрономĕ Антонов юлташсем ертсе пыраççĕ. Агрокружоксене бригадирсемпе звеноводсем, сухалакансемпе акакансем пурĕ 45 çын çÿреççĕ.

Колхоз членĕсем хăйсем умне кăçал вăтамран кашни гектартан 100 пăт тырă туса илес задача лартрĕç. Çак задачăна пурнăçа кĕртессишĕн вĕсем Янгорчинăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе ăмăртаççĕ.

Е. В.

Çамрăксен паха ĕçĕсем

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Ураскилт ялсоветĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче çуракине хатĕрленес ĕç сарăлса пырать. Вĕсем, Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем чĕнсе каланине ырласа, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Хире 7.000 лавран кая мар тислĕк кăлармалла, 500 центнер кĕл, 200 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемелле, Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун тĕлне ялхуçалăх машинисене, ут таврашĕсене юсаса пĕтермелле, вăрлăхсене тасатса кондицие çитермелле. Урăхла каласан, çуракине хатĕрленес ĕçе февралĕн 23-мĕшне вĕçлемелле.

Колхозсенче хĕрÿллĕ ĕç пуçланчĕ. Комсомолецсем колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пынă май, вĕсен ĕçри хастарлăхĕ вăйланчĕ. Кашни колхозпа бригада çуракине хăвăртрах тата лайăхрах хатĕрленес, тесе ăмăртса ĕçлет. «Маяк» колхозра вăрлăхсене пĕтĕмпех хывса çитернĕ, çитес вăхăтрах сортласа пĕтереççĕ, ялхуçалăх машинисене (плугсене, сÿресене, сеялкăсене) юсаса пĕтернĕ. Ку колхозра уйрăмах комсомолец В. Осипов ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет.

Юлашки вăхăтра çуракине хатĕрленес ĕç «Трудовик», «Шуçăм», «Пĕрлешÿ», «Заветы Ильича» колхозсенче те хăвăртланчĕ. Вăл колхозсем вăрлăх фончĕсем туса çитерсе, вĕсене пурне те лайăх сортласа хунă. Ку ĕçсенче комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем пример кăтартрĕç.

Электростанци ĕçне лайăхлатмалла

Канашри вагонсем юсакан заводри электростанцин (начальникĕ Петухов) ĕçĕнче яланах тĕрлĕ чăрмавсем пулаççĕ. 1943 çулăн вĕçĕнче электростанци ик-виçĕ куп ĕçлемесĕр ларнă. Çавна пула завод та хăйĕн планне тултарайман.

Электростанци начальникĕ Петухов юлташ аварисем пулнине хĕле начар хатĕрленнипе сăлтавлама пикенет. Вăл вутă ваклакан оборудованисем начар ĕçлени, хăшпĕр чух электростанци топливо çитеĕклĕ пулман пирки ĕçлемеини çинчен калать. Завод начальникĕн хуçалăх енĕпе ĕçлекен помощникĕ Воробьев юлташ электростанци ĕçĕпе сахал интересленет. Вăл хăйне ответлă тесе шутламасть пулас. Çавăн пекех техснаб начальникĕ Лисицин юлташ та электростанцие кирлĕ япаласене тупса пама тăрăшмасть.

Нумаях пулмасть заводри коммунистсен пухăвĕ завод ĕçĕсем çинчен сӳтсе-явнă. Пуху электростанци ĕçне çивĕччĕн критикленĕ, унăн ĕçне лайăхлатма хушнă. Анчах та улшăну туни курăнмасть-ха. Электростанци 1943 çулта энерги памалли плана пурнăçлайман. Кăçалхи çул та плана тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрать. Хĕле тĕплĕн хатĕрленмен. Кадрсем хатĕрлес ĕç те начар пырать.

Станци патне пымалли çула тĕрлĕ япаласем купаласа питĕрсе лартнă. Ку вара станцие топливо парса тăма чăрмантарать. Çаксем ĕнтĕ пурте завод руководителĕсем электростанци ĕçĕ çине сӳрĕккĕн пăхнине кăтартса параççĕ.

Электростанцире ĕçлекенсем хушшинче çирĕп дисциплина çук. 1943 çулта ĕçрен хăйĕн ирĕкĕпе 18 çын тухса кайнă, анчах вĕсене закон тăрăх ответ тыттарман. Рабочисемпе работницăсем хушшинче агитацилле-ăнлантарулла ĕçе йĕркеллĕн туса пымаççĕ. Ĕç дисциплинине пăснисем кăçал та пулнă. Рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те кирлĕ пек ĕçсем туни курăнмасть.

Çĕршывпа фронт интересĕсем электростанцисен хăвачĕпе туллин усă курма хушаççĕ. Çакна Канашри вагонсем юсакан завод руководителĕсен ăнланса илмелле. Электростанци ĕçне тĕпрен лайăхлатас тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

ВКП(б) Канаш горкомĕн электростанци ĕçĕпе ытларах интересленес пулать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Тата тухăçлăрах ĕçлеме пултăмăр

Пирĕн япаласем юсакан механически мастерской пĕлтĕр март уйăхĕнче организациленĕ. Ун чухне вăл ытла пысăк ĕçсемех тума пултарайман, мĕншĕн тесен инструментсем те çитмен, материалсем енчен те хĕсĕкрех пулнă.

Юлашки уйăхсенче мастерской ĕçĕнче чылай пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Унăн производстви пысăкланчĕ тата вăл тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕ. Октябрь уйăхĕнче эпир хамăра панă плана 105 процент, ноябрьте—120 процент тултартăмăр. Декабрь уйăхĕнче коллектив тата тухăçлăрах ĕçлерĕ, рабочисем икшер-виçшер норма тултарса пычĕç, пĕтĕм коллектив вара уйăхри плана 270 процент ытла тултарчĕ.

Пирĕн мастерской коллективĕ хуçалăхра кирлĕ япаласем—сехетсем, çĕвĕ машинисем, велосипедсем, хут купăссем юсать. Сентябрь уйăхĕнче сĕтел-пукансемпе витрĕ-хаткасем юсакан цех организацилерĕмĕр, халь тата уçăсем тума пуçларăмăр. Калас пулать, чылай рабочисемшĕн çак ĕç çĕнĕ ĕç пулса тăрать пулин те, вĕсем ăна лайăх тăваççĕ. Çамрăк работница Агафия Тимофеева сехетсемпе хут купăс юсас ĕçсене 5 уйăх хушшинче вĕренсе çитрĕ. Халĕ вăл хăйне панă заданисене яланах ирттерсе тултарать.

Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерӳсем пире татах та ытларах вăя хурса ĕçлеме хавхалантараççĕ. Эпир 1944 çулта татах та тухăçларах ĕçлеме пултăмăр.

И. ЛУКИН,
Элĕкри япаласем юсакан механически мастерскойăн директорĕ.

Смотра хатĕрленеççĕ

ÇЕРПУ. (Телефонпа). Аслă Тукаль ялсоветĕнчи вулав çурчĕ çумĕнче (заведующийĕ Григорьев юлташ) халиччен нимĕнле кружоксем те пулман. Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленнĕ май кунта драмкружок тата шумовой оркестр организациленĕ. Драмкружок членĕсем «Тăван çĕршывшăн» ятлă пьесăна лартса пама хатĕрленеççĕ. Вĕсем темиçе хутчен те ялсенче пулса хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç.

П. ПАВЛОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шăхасан районĕнче кадрсемпе мĕнле ĕçлеççĕ

Большевиксен партийĕ кадрсене суйласа илсе тĕрĕс вырăнаçтарасси çине ялан тимлĕн çаврăнса пăхмалла, тесе вĕрентет. Кадрсене тĕрĕс вырăнаçтарни хуçалăх задачисене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма май парать.

ВКП(б) Шăхасан райкомĕ юлашки вăхăтра кадрсемпе ĕçлессине чылаях лайăхлатрĕ. Вăл колхозсене ертсе пыма тĕрĕсленнĕ, халăх ĕçне чĕрере парăннă колхозниксемпе колхозницăсене лартма тăрăшать. Колхозсен председателĕсене тата ответлă ĕçсенчи çĕнĕ работниксене пулăшать. Вĕсемпе ятарласа канашлусем ирттерет. Кунсăр пуçне райком работникĕсем вырăнсене тухса сӳресе, кулленхи ĕçре пулăшса пыраççĕ. Малта пыракансене парти ретне илес тĕлĕшпе чылай ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта кăна колхоз председателĕсемпе фермăсен заведующийĕсем тата бригадирсем 13 çын парти ретне кĕнĕ.

Ертсе пырас ĕçри кадрсем хуçалăхла задачăсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пурнăçа кĕртеççĕ. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра ертсе пырас ĕçри работниксем нумайĕшĕсем 3—4 çул хушши улшăнман. Колхоз председателĕ коммунистка В. Степанова тата ытти работниксем те хăйсен ĕçне вĕренсе çитнĕ, çавăнпа вĕсем колхоза районра малти вырăна кăларма пултарчĕç. Колхоз 1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Вăл государствăна 6000 пăт тырă сутрĕ. Колхозник Е. Чернов юлташăн çемьи 700 ĕçкунĕ ытла тунă. Вăл хăйĕн хуçалăхĕнче перекетленĕ тырра государствăна 75 пăт сутрĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕхсенчен çулсеренех пысăк тупăш илет. Кунта фермăсен заведующийĕ пулса П. Михайлова юлташ виççĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе юратса туса пырать. 1942 çулта колхоз 60 кролик аминчен 400 çăвăр илнĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе ирттерсе тултарнă.

Колхоз председателĕ колхозниксене ĕçе мобилизацилеме пултаракан, обществăллă хуçалăхăн интересĕсене мала хуракан, ялхуçалăх артелĕнче дисциплинăна çирĕплетме пултаракан çын пулмалла. Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Васса Степанова юлташ çавăн пек пахалăхсемпе палăрса тăрать. Çавна пула ĕнтĕ вăл ертсе пыракан колхоз çулран çул тĕреклĕнсе пырать.

Уйкас Кипекри Тельман ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса коммунист Ф. Тихонов юлташ ĕçлет. Вăл ертсе пыракан колхозри ответлă вырăнсенче ĕçлекен колхозниксем колхоза тĕреклетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ Тихонов юлташ вăхăта канцелярийĕнче ларса ахаль ирттермест, колхозниксемпе пĕрле пулса, парти райкомĕпе райсовет исполкомĕн кăтартăвĕсене яланах вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшать. ВКП(б) райкомĕ Тихонов юлташа колхоз председателĕ пулма çирĕплетнĕренпе çулталăк кăна иртнĕ пулсан та вăл хăйĕн ĕçĕнчи пултарулăхне кăтартса пачĕ. Колхоз малти вырăна тухрĕ.

Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз председателĕ Николаев ответлăха çухатса колхозниксем хушшинчи ĕç дисциплинине япăхтарнă пулнă. Вăл ялхуçалăх артелĕн уставне пăсса пынă. ВКП(б) райкомĕ çав факта вăхăтра тăрă шыв çине кăларса, кирлĕ мерăсем йышăнчĕ. Унта колхоз председателĕ пулма отечественнăй вăрçă инвалидне, медаленосец Т. Иванов юлташа суйланă. Вăл кĕске вăхăтрах колхозри çитменлĕхсене пĕтерчĕ. Халĕ колхоз çитес çуракине тимлĕн хатĕрленет.

Кадрсене вĕренсе пĕлес ĕçре парти комитечĕсен учет ĕçĕнче йĕркелĕх туни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах Шăхасан райкомĕ çак ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ-ха. Хăшпĕр колхоз председателĕсемпе фермăсен заведующийĕсене райкомра тĕплĕн пĕлмеççĕ.

1943 çулта районра колхоз председателĕсемпе 14 канашлу, фермăсен заведующийĕсемпе 3 канашлу ирттернĕ. Анчах та уйхир ĕçĕн бригадирĕсемпе, колхоз тимĕрçисемпе тата ревизи комиссисен председателĕсемпе пĕр канашлу та ирттермен. Хăшпĕр чух канашлусене тĕплĕн хатĕрленсе ирттермеççĕ, çавăнпа вĕсем инструктивнăй характерпа пулса иртеççĕ.

ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕнче икĕ инструктор ĕçлет. Вĕсене кашниних уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Çак инструкторсем хăйсем çумне çирĕплетсе панă ялковечĕсемпе колхозсенче сахалтарах пулаççĕ-ха. Çавăнпа вĕсем хăйсен участокĕсенчи кадрсене пурне те тĕплĕн пĕлмеççĕ.

Инструктор хăйĕн участокне, колхозсенчи работниксене лайăх пĕлме тивĕçлĕ, унăн хăйĕн пĕтĕм ĕçне участокри ĕçпе çыхăнтарса пымалла. Çаксене тума вĕренни, теорие пĕлни кирлĕ.

Мĕнпур ĕçе кадрсем татса параççĕ. Кадрсемпе ĕçлессине лайăх организацилес пулать.

В. ВЕСЕЛОВ.

КОМСОМОЛ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕНЧЕ

КОМСОМОЛ ЙЫШĔ УСЕТ

Комсомольски районри колхозсенчи çамрăк стахановецсем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕреççĕ. Декабрь уйăхĕнче 65 çамрăка комсомола илнĕ. Вăл шутран Калинин ячĕпе тăракан колхозра (секретарĕ Тимкина юлташ) 6 çамрăк комсомола кĕнĕ. Вĕсем, транспорт бригадинче ĕçлесе, хăйсен пултарулăхне кăтартнă

СЕМИНАРА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ВЛКСМ Ишлей райкомĕ 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организаци секретарĕсен семинарне ирттерет. Семинарта пур секретарьсем те пулаççĕ, халĕ вĕсем семинара хатĕрленеççĕ.

СЕКРЕТАРСЕН СЕМИНАРНЕ 21 ÇЫН ПУХĂННА

ШАМАРША, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта 5-мĕш кун ĕнтĕ комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсен семинарĕ пырать. Семинара пурĕ 21 çын пухăннă. Вĕсем çуракине хатĕрленесси, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен, колхозра ĕç вăйне тĕрĕс организацилесси, ялсенчи çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе йĕркелесси çинчен тата ытти темăсемпе те докладсем итлерĕç.

А. МАТВЕЕВА.

Чаплă патриотсем

Пирĕн республика государствăна кооперации урлă тырă сутас ĕçре пысăк çитĕнӳ турĕ. Колхозсемпе колхозниксем 2.500.000 пăт ытла тырă сутрĕç. Малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетлесе хăварнă тыррийчен 100—150-шар пăт государствăна сутрĕç. Январĕн 4-мĕшĕнче Шупашкара государствăна тырă сутас ĕçре хăйсен патриотизмне кăтартнă 150 колхозник пухăнчĕç. Вĕсем республикăри партипе совет органĕсен руководителĕсемпе, столицări предприятисенчи паллă çынсемпе тата çар чаçĕсен представителĕсемпе тĕл пулчĕç.

Малта пыракан колхозниксене хисеплесе, Советсен çуртĕнче чаплă каçхи апат пулса иртрĕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш республикин правительстви ячĕпе çулăмлă патриотсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ саламлă сăмах каларĕ.

— Тăшмана çĕнтермешкĕн çĕршывпа фронта тырпул кирлĕ,—тет Андреева юлташ.—Эсир государствăна 50-шар, 60-шар, 100-шер пăт тата ытларах та тырă сутса, тăшмана çĕнтермешкĕн Хĕрлĕ Çара нумай пулăшрăр. Пирĕн Тăван çĕршыв сирĕн патриотизмлă ĕçĕре нихçан та манмĕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар халĕ, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, тăшмана çĕнтерсе пырать. Кашни кунах çĕршер ялпа хулана тăшманран тасатать. Хĕрлĕ çар çĕнтерĕвĕсем темиçе миллион совет çыннине нимĕçсен фашистла тыткăнĕнчен ирĕке кăларчĕç. Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ!—тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне З. А. Андреева юлташ.

Пухăннисем Сталин юлташа хисеплесе, пурте ура çине тăрса тăвăллăн алă çупаççĕ.

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозран килнĕ колхозник Валишев юлташ хумханса хĕрӳллĕ сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн колхоз государствăна 10.000 пăт, колхоз председателĕ А. Гаязов юлташ 166 пăт сутрĕ. Гаязов юлташ, чирлĕ пирки, çак хисеплĕ пухура пулаймарĕ. Манăн тăватă ывăлăм,—тет Валишев юлташ,—Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Эпĕ Хĕрлĕ Çаршăн, хамăрăн Тăван çĕршывшăн нимĕн те хĕрхенместĕп. Эпĕ государствăна 72 пăт тырă сутрăм.

Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ Маркиянов, Вăрнар МТС-ĕн трактористки Арсентьева юлташсем тата республикăри малта пыракан предприятисемпе çар чаçĕсен представителĕсем те хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каларĕç.

Пухăннисем çавăн пекех халăх поэчĕ орденоносец Н. И. Шелеби юлташăн сăмахне те кăмăлласа итлерĕç.

Чаплă каçхи апатра пулнисемшĕн Чăвашсен государство академи театрĕн тата Чăваш радиокомитечĕн артисчĕсем концерт пачĕç.

Примерлă пионер

КАЛИНИНО. Çавалкассинчи туллимар вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренекен пионер Николай Семĕнов, хăйне вĕренӳре те, колхоз производствинче тата юлташĕсем хушшинче те примерлă тытать. Вăл 13 çулта кăна. Вĕренӳре яланах «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе ĕлкĕрсе пырать.

Çамрăк патриот, колхозра иртнĕ çулта пĕтĕмпе 120 ĕçкунĕ ытла тунă. Кăçал 200 ĕçкунĕ тума сăмах пачĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Цифрăсен хӳтлĕхĕнче...

Йĕлтĕрпе ярăнма вĕренесси çинчен сăмах пуçлансанах, ВЛКСМ Элĕк райкомĕн работникĕсем нумай тĕрлĕ цифрăсем пĕлтерме тытăнаççĕ. ВЛКСМ Обкомĕ хушнă тăрăх çак хĕлте 20 сехетлĕ программăпа 431 çамрăка, 30 сехетлĕ программăпа 216 çамрăка вĕрентсе кăлармалла. Хальхи вăхăтра йĕлтĕрпе ярăнма 802 çын вĕренеççĕ. Унсăр пуçне тата 141 учитель вĕренет.

— Ку енĕпе ĕçсем аптăрамаллах мар. Инструктор-общественниксем хатĕрлес енĕпе вара кăштах япăхрах ĕçлетпĕр. Инструктор пулма 28 çын вĕрентсе хатĕрлемелле. Халĕ 18 çын вĕренеççĕ,—каласа парать ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Семенова юлташ.

Цифрăсене ĕненсен, ĕç начар мар пынă пек туйăнать. Тĕрĕссине илсен вара пачах урăхла. Районра колхоз çамрăкĕсене йĕлтĕрпе ярăнма вĕрентес ĕç хут çинче кăна пулса пырать. Акă фактсене илсе пăхăпăр.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, йĕлтĕрпе ярăнма вĕрентес ĕçе колхоз çамрăкĕсене активлăн явăçтармалла. Элĕк районĕнче çавна тумаççĕ-ха. Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхозра çамрăксем сахал мар. Унта комсомолăн пуçламĕш организацийĕ те пур. Анчах вĕсенчен нумайĕшĕсем кăçал йĕлтĕр çине тăрса та курман. Комсомолецсенчен çурри ытла йĕлтĕрпе ярăнма пĕлмеççĕ. «Юрĕ ĕнтĕ, иртнĕ хĕлте те ярăнмасăрах ирттертĕмĕр», теççĕ халĕ вĕсем.

ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем те çавăн пек шухăшсемпе килĕшеççĕ пулас. Вĕсем ку ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе нимĕнле мерă та йышăнмаççĕ. Комсомол организацинче иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ секретарь çук. Комсомолецсен пухăвĕ пулманни çур çул ытла иртнĕ.

Куракăшри «Безбожник» колхозри пуçламĕш организаци те çамрăксем хушшинче йĕлтĕр спортне сарассишĕн тăрăшмасть. Унта ку таринччен те тренировкăллă занятисем ирттермен. Пиçенерти пуçламĕш организацин секретарĕ Антонова юлташ та йĕлтĕрпе ярăнма вĕренессине организацилес енĕпе питĕ сӳрĕк ĕçлет. Унта çамрăксен йĕлтĕрсем те пур. Анчах халĕ вĕсем: эпир çамрăксене комсомола илес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр, ку ĕçе вĕçлесен вара йĕлтĕрпе ярăнма вĕренме тытăнатпăр, тесе сӳпĕлтетсе лараççĕ.

Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрпе ярăнма вĕренес кăмăлĕ пысăк. Вĕсем йĕлтĕр спортне юратаççĕ. Анчах та вĕсене организацилес тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ тивĕçлипе ĕçлемест. Райкомол, шкулсенчен пухнă цифрăсем хӳтлĕхĕнче тăрса, çак кирлĕ ĕçе кая хăварса пырать.

ВЛКСМ Элĕк райкомĕн колхоз çамрăкĕсене йĕлтĕрпе ярăнма вĕрентес тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

Х. ЛИСИН.

ШОФЕР

Çак ӳкерчĕк çине Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсем ĕненмесĕр пăхĕç.

— Ку Федор Малов мар пулĕ? Вăл илемлĕ йĕкĕтчĕ,—тесе калĕç вĕсем.

Çак сăмахсене Федор илтнĕ пулсан, вăл тӳрех çапла калĕччĕ: «Вăрçă ватăлтарчĕ сăнăма. Вăрçă чарăнĕ, каллех илемлĕ сăн-пуçлă йĕкĕт пулăпăр...»

Малов, Федор Гавриловича Эльменти Пушкин колхозникĕсемпе колхозницисем кăна мар, Вăрнар, Калинино районĕсенчи чылай çынсем пĕлсе тăнă.

— Ку, пирĕн МТС шоферĕ пулнăскер—Федор Малов,—тейĕç унăн сăнне курсан чылай колхозниксем.

* * *

Этем хăйĕн пурнăçĕнче нумай курать. Федор Гаврилович, Малов ыттисем пурнăçа çынах та мар. Çапах та вăл хăйĕн кĕске пурнăçĕнче чылай курнă, хăрушă та йывăр кунсене тӳссе ирттернĕ.

Белофинсемпе çапăçнă чухне вăл 50 градуслă сивĕне тӳссе ирттернĕ. Вĕçен кайăк сивве чăтаймасăр персе аннă. Анчах та вăрçă, кирек сивĕ пулсан та, тӳссе ирттерес пулать. Малов машина моторне шăнма памасăр кирлĕ боеприпассене фронта вăхăтра турттарса çитернĕ.

Пĕррехине Малов юлташăн автомашинин лачакана путма тытăннă пулнă. Машина çийĕнче снарядсем, минăсем пулнă. Сивĕпе мотор ĕçлеме чарăннă. Инçех мар хырлăх ăшĕнче ăнланмалла мар сасăсем илтĕннĕ. Финн салтакĕсем пулнă вĕсем.

— Урус симерг будут твоя, сдавася, — кăшкăрнă вырăс чĕлхине хуçкаласа.

Малов аллисене çӳлелле çĕклесе тăнă. Унăн çывăхнелле финсен 3 салтакĕ винтовкисене малалла тытса савăнăçлăн çывхарса пынă. Малов юлташăн куçĕсем пиçихи çумне çакнă гранатăсем çине те белофинсем çине те пăха-пăха илнĕ. Финсем 15—20 метра çывхарсан сасартăк граната çурăлнисем илтĕнсе кайнă. «Русс сдался» кулса кăшкăрнă Малов. Çав самантра юр ăшне финн салтакĕсем тӳне-тӳне ӳкнĕ...

Отечественнăй аслă вăрçă виççĕмĕш çул пырать ĕнтĕ. Çак тапхăрта Малов юлташ каллех нумай хурăшурă тӳснĕ. Вăл Волынская облаçĕнчи Ковель хули çине нимĕçсен малтанхи бомби аннине сăнанă, Житомир облаçĕнчи Коростень хулинчи чугун çулăн пысăк узелне аркатнине асăрханă, Украина çĕршывĕн столици —Киев хулине хура тĕтĕм сырса тăнине курнă. Полтава, Харьков хулисене хурланчăклăн хăварса, Донбасс урлă каçса, Сталинград патне çитсе чарăннă. Вăл советăн кашни хулишĕн, кашни ялĕшĕн паттăррăн тăрса çапăçнă.

Иртнĕ кĕркуннехи сивĕ кунсенче аслă Атăл хĕрринче хаяр çапăçусем пынă вăхăтра Малов юлташăн машини Атăл хĕрринчи айлăмари ял пуçĕнчи пĕр лупас çумĕнче тăнă. Анчах халĕ унăн машини снарядсемпе минăсем турттараканни мар, нимĕçсен çĕлен-халтисене çĕрпе хутшăнтаракан машина пулнă.

... Тĕттĕм каç пулса килнĕ. Малов юлташăн тĕттĕмлĕхпе усă курса, фронт çывăхне пырса хамăрăн пехотăна, çул уçса памалла пулнă.

— Пирĕн машина мĕнле ĕçлет?—ыйтнă унтан командир.

— Лайăх—ответленĕ Малов юлташ.

Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ. Нимĕç фашисчĕсем йышăнса тăракан территоринче вутлă-çăмăр пуçланнă. Ир енне пирĕн пехота наступлени пуçарса янă...

Унтанпа нумай уйăхсем иртрĕç. Çак тапхăрта Малов юлташ Донбасс урлă каçса Харьков, Полтава хулисене савăнăçлăн пырса кĕнĕ. Украина çĕршывĕн столици—Киев виттĕр тухнă. Коростень хули витĕр тухса Ковель хулине çитессишĕн малалла вăркăнать.

Çамрăк шоферăн кăкăрне икĕ орден Хĕрлĕ Ялавпа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем тата «За оборону Сталинграда» медальпе гварди значокĕ илемлетсе тăраççĕ.

Тăван çĕршывăн маттур та хăюллă шоферĕ хăйĕн çĕршыв умĕнчи тивĕçне çӳлте тытса пырать. Вăл çĕршывăн шанчăклă паттăрĕ!

Е. ВОРОБЬЕВ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: январĕн 5-мĕшĕнче Америкăн 5-мĕш армийĕ туллă-çăртлă вырăнти йывăр условисенче атака пуçласа янă. Вăл 10 миля сарлакĕш фронтра пĕр миля малалла куçнă. Адриатика тинĕсĕ хĕрринче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Январĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ тăшманăн Вăтаçĕр Италири çар объекчĕсене атакăланă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ятарласа çапла пĕлтереççĕ: январĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германин Штеттин ятлă хулине вăйлăн тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Берлина, Хĕвеланăç Германие тата Çурçĕр Франципе тапăннă. Çав операцисенчен 15 самолет таврăнман.

Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем январĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла Бордо тата Тур (Франция) хулисенчи аэродромсене, Кильри суднăсем тăвакан верфе тата Хĕвеланăç Германири çар объекчĕсене атакăланă. Тăшман бомбардировщиксен хăшпĕр соединенийĕсене вăйлăн хирĕç тăнă. Тăшманăн 62 истребительне персе ӳкернĕ. Çав операцисенчен хăйсен базисене 37 самолет таврăнман.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Банья-Лука хулин урамĕсенче Германи çарĕсемпе тата усташасемпе хаяррăн çапăçаççĕ.

Босански Нови—Приедор—Баньа-Лука секторĕнче çав çарăн чаçĕсем малалла тапăнса пыраççĕ. Хĕвелтухăç Боснире тăшманăн наступленийĕ пĕтĕмпех путланса ларнă. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем хăйсен çухатнă територине, çав шутра Воасенки хулине çĕнĕрен тытса илнĕ. Çар пурлăхĕ чылай тытса илнĕ.

Санджакра Нова Вароша çĕнĕрен тăшмантан тасатнă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем нумай вилнĕ тата аманнă.

ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМПЕ ЛАВАЛЬ ПОЛИЦИЙĔ ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ТИСКЕРРĔН ТЫТКАЛАÇÇĔ

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: Францирен илнĕ хыпарсем тăрăх, оккупацилле влаçсемпе Виши полицийĕ Франци патриочĕсене хаяррăн тыткалаççĕ. Çак кунсенче Бретаньре Франци патриочĕсене питĕ нумай çынна арестленĕ. Германи çар сучĕ Тури Савойăра 5 француза, партизан отрядне пулăшса тăнă тесе айăпласа асаплантарса вĕлерме йышăннă. Тонон хули районĕнче (Тури Савойя) гитлеровецсем партизансене хирĕç пысăк карательнăй экспедици янă.

ЭДУАРД БЕНЕШ ЛОНДОНА ТАВРĂННĂ

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ, (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки республикĕн президенчĕ Эдуард Бенеш январĕн 6-мĕшĕнче Мускавран Лондона таврăннă.

КĔСКЕН

** Америка çарĕн çухатăвĕсем ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне 94.594 çын шутланнă. Вĕсенчен 15.334 çын вилнĕ, 33.049 çын аманнă. Ыттисем пĕр хыпарсăр çухалнă е тыткăна лекнĕ. Тинĕс-çар флочĕн çухатăвĕсем 32.504 çын шутланаççĕ, вĕсенчен 13.983 çынна вĕлернĕ. 5.868 çынна амантнă.

** Çак çулхи октябрь уйăхĕн иккĕмĕш çуррине Франци патриочĕсем 1.249 хутчен сăтăрла тата диверсилле ĕçсем тунă.

** Германи оккупацилле влаçĕсем Францири Аннеси хулине (Çӳлти Савойя департаментĕнче вăрçă лару-тăрăвĕ туса хунă, хула урамĕсене гитлерла салтаксем хураллаççĕ. Аннесие Гренобльрен полицейскисем пырса çитнĕ.

Отв. редакторăн ĕçĕсене тăвакан П. Т. ЗОЛОТОВ.

Шупашкарти Хресчен çуртне бухгалтер кирлĕ. Хваттер параççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Чувашская, 7/16. Телефон: 5—43, 6—84.

Йăвăр çухалнă. Тĕсĕ—хура-турă, 1941 çулта çуралнă, „Сынок" ятлă.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Ишлейский район, Скильял-Покровский с совет, Колхоз „Парчикассы".

ПРАВЛЕНИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.